К С(чув)
А 95
19812.470

ВАЛЕМ АХУН

# ШУРĂ АКĂШ



Чăваш кĕнеке издательстви

КОНТРОЛЬНЫЙ ЛИСТОК
СРОКОВ ВОЗВРАТА

КНИГА ДОЛЖНА БЫТЬ
ВОЗВРАЩЕНА НЕ ПОЗЖЕ
УКАЗАННОГО ЗДЕСЬ СРОКА

Колич. пред. выдач

КПК. Зак. 2935. Тир. 80 млн.



К ф
К С(Чув)
А 95

ВАЛЕМ АХУН

# ШУРĂ АКĂШ

ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ * ШУПАШКАР * 1976

С (Чув) 2
А 95

ПРОВЕРЕНО
2007

Шурă акăш.

Çак пĕчĕкçĕ кĕнекене кĕнĕ чылай сăвăсене Валем Ахун халăх сăмахлăхĕнчи илемлĕ тĕслĕхсемпе, унти ытарлă сăмах çавранăшĕсемпе усă курса çырнă. Вĕсем çутçанталăк илемне, хамăр таврари япаласене, çынсене лайăхрах сăнама вĕрентеççĕ.

Кĕнекере халăх сăввисене илемлетсе, анлăлатса çырнă произведенисем те пур.

19812-чув

Чувашская республиканская библиотека им. М. Горького

А $\frac{0761-07}{М\ 136(03)-76}$ 102—76

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1976 ç.

Вăштăр-вăштăр уçă çил,
Сулхăн варкăш илсе кил!
Утă çулакансене,
Улăхри кĕтӳçсене
Кăштах уçăлтарса ил.



Вăштăр-вăштăр ырă çил,
Сулхăн варкăш илсе кил!
Тырă выракансене,
Суха тăвакансене
Кăштах ачашласа ил.





Сăрт тăрринчи çилáрмань
Вăшăл-вашăл çунатлă,
Çуначĕсем тĕреллĕ,
Тӳпетейĕ чĕнтĕрлĕ,
Аркийĕсем хăюлă,
Пуставĕсем кăшăллă,
Ырçийĕсем çăнăхлă,
Алăкĕсем сăлăплă,
Пусмийĕсем шур чуллă,
Хӳри вĕçĕ тевĕшлĕ.





Шĕшкĕ касрăм — çатан аврăм,
Улмуççилĕх пахча тытрăм.
Тĕкми пулчĕ юманран,
Ураççийĕ — çĕмĕртрен,
Алăкĕ ун — хурăнран,
Хăлăпĕ — сар çăкаран.

Кăмака çине вир акрăм,
Юрла-юрла ӳстертĕм.
Хăмăлĕ пулчĕ вăрман пек,
Шерепийĕ — тухъя пек.
Вырма, çапма йыхрав ятăм —
Йышпа тухса ниме турăм:
Шăши пычĕ çурлапа,
Йытти пычĕ çавапа,
Хура кушак — тăпачпа,
Чăпар автан — сенĕкпе,
Чăххи-чĕппи — хутаçпа,
Качакисем — кăрманпа.
Ĕçлерĕмĕр ташласа,
Салантăмăр юрласа.







# ТИМĔРÇĔ



— Чанк! Чанк! тимĕрçĕ!
— Мĕн кирлĕ?
— Кĕмĕл çĕрĕ.
— Мĕн тума?
— Çĕрĕлле вăй выляма.

— Чанк! Чанк! тимĕрçĕ!
— Мĕн кирлĕ?
— Кĕмĕл сулă.
— Мĕн тума?
— Алă сулса ташлама.



— Чанк! Чанк! тимĕрçĕ!
— Мĕн кирлĕ?
— Тимĕр тĕрен.
— Мĕн тума?
— Уй-хирте суха тума.

— Чанк! Чанк! тимĕрçĕ!
— Мĕн кирлĕ?
— Ăста пуртти.
— Мĕн тума?
— Шурă-шурă пӳрт тума.

## ШУРĂ АКĂШ

Шывĕ юхать,
Шывĕ юхать,
Шывĕ юхать шурă-шурă чул çинчен.

Хумĕ вылять,
Хумĕ вылять,
Хумĕ вылять ешĕл çыран хĕррипе.

Вĕçрĕç килчĕç,
Вĕçрĕç килчĕç,
Вĕçрĕç килчĕç шурă акăш чĕпписем.

Вăй вылярĕç,
Вăй вылярĕç,
Вăй вылярĕç çутă-çутă хум çинче.

... Вĕçрĕç кайрĕç,
Вĕçрĕç кайрĕç,
Вĕçрĕç кайрĕç шурă акăш чĕпписем.

Шывĕ юлчĕ,
Шывĕ юлчĕ,
Шывĕ юлчĕ хуралса та хурланса.

Хăмăш юлчĕ,
Хăмăш юлчĕ,
Хăмăш юлчĕ хумханса та юрласа.



## ХУРЧĂКА

Çӳлте вĕçет хурчăка,
Çӳлте вĕçет хурчăка,
Анкартине анасшăн,
Анкартине анасшăн.
Сарă чĕппе тытасшăн,
Сарă чĕппе тытасшăн.

## КАЙĂК ХУРСЕМ

Кайăк хурсем вĕçсе килеççĕ
Ушкăн пуçĕ ертсе пынипе.
Сĕве хĕрне çитсен анаççĕ,
Симĕс курăк çыртас килнипе.

## ТĂРНАСЕМ

Тăрик! тăрик! тăрнасем,
Тăрик! тăрик! тăрнасем
Кăнтăр енчен вĕçеççĕ,
Ăшă илсе килеççĕ.
Тăрик! тăрик! тăрнасем,
Тăрик! тăрик! тăрнасем,
Анăр пирĕн ял çумне,

Çутă Хырла хĕррине.
Унта пирĕн улăх пур,
Улăхĕнче çăлкуç пур,
Çăлкуçĕнче тăр шыв пур.
Шывĕ тăрна куçĕ пек,
Пăхсан тĕпĕ курăнать.



## ЧАКАК

Чак-чакак,
Ула тăпак!
Мĕн хаваслăн сиккелен,
Хӳрӳ вĕçне вылятан?
Хыпар илсе килтĕн-им?
Çуллă çăмах тупрăн-им?

## ШЫВ ЧĂХХИ

Кăтик! кăтик! шыв чăххин
Йăви тыла варринче,
Çӳллĕ хăмăш хушшинче,
Çич çăмарти йăвинче.
Кăтик! кăтик! шыв чăххи
Кăтиклемест, çӳремест.
Пусма ларать, хускалмасть,
Чăпар чĕпĕ кăларать.





## ĂМĂРТКАЙĂК

Ăмăрт вĕçет пĕлĕт айĕнче,
Куçĕ унăн Сăр шыв çийĕнче.
Йăви унăн юман тăрринче,
Чĕппи унăн мамăк ăшĕнче.

## КĂВАКАРЧĂН

Кăвик-кăвик кулюкка
Кăлтăр-кăлтăр кускалать,
Вĕттĕн-вĕттĕн пускалать,
Тулă пĕрчи сăхкалать.
Шулап вĕçне ларать те—
Тумлам-тумлам, шыв ĕçет.

## ШĂПЧĂК

Хурăнлăхра шăпчăк юрлать,
Сасси каять шыв тăрăх.
Сăрт хыçĕнчен хĕвел тухать,
Ăшши каять çĕр тăрăх.

* * *

Сар хĕвелĕн ылтăн урисем
Вăрăмланчĕç, шуçăм сӳннĕçем.
Акă вăл хăпарчĕ те çӳле —
Ларчĕ шурă пĕлĕтсем çине.
Йăлтăр-йăлтăр пăхрĕ савăнса,
Тĕнчене вăл ячĕ ăшăтса.

* * *

Тух-тух, Хĕвел!
Тух, Хĕвел!
Ул ачу кайнă Ăтăла,
Хĕр ачу кайнă Çавала.



Ылтӑн кармакупа туртса ил,
Кӗмӗл таканупа ӑсса ил.

Тух-тух, Хӗвел!
Тух, Хӗвел!
Ҫу парӑпӑр — ҫут тирӗкпе,
Пыл парӑпӑр — сар чӗреспе.
Ҫу пекех ҫемҫелтӗр кӑмӑлу,
Пыл пекех ҫуталтӑр чӗрейӳ.

Тух-тух, Хӗвел!
Тух, Хӗвел!
Йӑлттам та ҫивчӗ утсене
Кӳлсе тӑратнӑ кӳмӳне.
Хӑйсем пурте йӑл-йӑл саррисем,
Вӗлкӗшеҫҫӗ ҫилпе ҫилхисем.

## СĔМ ВĂРМАНТИ ХУРĂНИН

Сĕм вăрманти хурăнин,
Пике хĕр пек хурăнин,
Çичĕ тĕрлĕ кĕвви пур,
Тăват тĕрлĕ усси пур:
Çан-çурăма кантарать,
Тĕттĕм пӳрте çутатать,
Пĕчĕк ачи-пăчине
Тутлă шерпет ĕçтерет,
Шăмпай ямшăк кӳмине
Йăкăр-йăкăр кустарать.

## ЮМАН

Йĕкĕр-йĕкĕр йĕкĕрпи,
Вăхăт çитсен — шăкăрпи.
Нӳрĕ пулсан — тымарпи,
Вĕлтĕр-вĕлтĕр çулçăпи.
Пĕрне-сĕрне — пуçхĕрлĕ,
Хам çаврăнăп çич тĕрлĕ.
Ӳсетĕп эп виççĕр çул,
Чăтатăп эп çичçĕр çул.

---

Хура патша — вăрманта,
Никĕс пукань — арманта.
Касмăк-сасмăк нӳхрепре,
Тĕкми-чикми — хӳмере.

Качакине утланса,
Мăк сухалне каçăртса,
Телле кайрĕ Туйсара,
Çич çухрăмри пасара.
Тĕлĕнеççĕ йытăсем,
Ахăраççĕ ачасем,
Шак хытаççĕ туйсарсем,
Пĕç çапаççĕ çĕрпӳсем:
— Ай, хитре Телле «лаши»,



19812-43В
Чувашская республиканская
б...тека
им. ... Горького

Çитеймест кăштах маси!
Витсен чаплă кавирпе,
Çиветлесен ĕнчĕпе,
Çĕнĕ йĕнер туянсан,
Йĕвенне укаласан,
Селĕм пулĕччĕ питех!
Пулăн ху та хун* пекех! —
... Качакине утланса,
Мăк сухалне каçăртса,
Телле кайрĕ Туйсара,
Çич çухрăмри паçара.

* Хун — патша.

## ÇИМĔП, ÇИМĔП ТЕЕКЕН...

Кулюк кукăль пĕçерет,
Сантăр çисе пĕтерет.
Кулюк турăх кĕверет,
Сантăр ĕçсе пĕтерет.
Çимĕп, çимĕп теекен —
Çичĕ кукăль çиекен,
Çич кăвакал вăртакан,
Пичке шерпет ĕçекен.
Пурпĕрех, ав, тăранман:
— Парăр,—тет,— тата шăрттан!

Сантăр, Сантăр, Сантăркка—
Утаймасть те, мăнтăркка.



Çырма тăрăх йăпшăнса,
Тутисене çуласа,
Чее тилĕ шăвăнать,
Хурсене вăл хапсăнать.
Шурă хурсем — кикаксем —
Сисеймеççĕ, айвансем...
Эй, Тимуç,
Куçна уç!
Лайăх сыхла хурсене,
Ан шутла пĕлĕтсене!
Кĕркунне çитсен, асту,
Пушах пулĕ тӳшекӳ.
Хур тукмакĕ вырăнне —
Ёмсе ларăн пӳрнӳне.





## КАШКĂР

Тукмак хӳре, тук! тук! тук!
Тукмак хӳре шак! шак! шак!
Хырăму пит выçрĕ-им,
Хырă тăрне кайрĕ-им?
Вут пек çунан куçупа,
Выçă куçлă куçупа,
Йăлтăр-ялтăр тутаран,
Ял еннелле пăхкалан.

Сĕм вăрманти упийĕн
Вĕлле-вĕлле пыл хурт, тет.
Атьăр, атьсем, хăнана —
Упа патне пыл çиме.

Хăвалăхри мулкачин
Пахчи-пахчи кишĕр, тет.
Атьăр, атьсем, хăнана —
Мулкач патне кишĕре.

Тарăн варти сар тиллин
Карти-карти шур чăх, тет.
Атьăр, атьсем, хăнана —
Шур çăмарта тутанма.

Туйралăхри кашкăрин
Кĕтӳ-кĕтӳ ĕне, тет.
Атьăр, атьсем, хăнана —
Кашкăр патне сĕт ĕçме.

Хура вăрман хыçне юр çунă,
Хура сăсар тухса йĕр тунă.
Хура сăсар йĕрне йĕрле-йĕрле,
Сисмерĕм те куна каç турăм,
Ывăнтăн пуль эс те, пурсуйăм.

Хура вăрман хыçне юр çунă,
Чее тилĕ тухса йĕр тунă.
Чее тилĕ хыççăн çӳре-çӳре,
Сисмерĕм те куна каç турăм,
Атя, каяр киле, пурсуйăм.



* * *

Çуркунне, çуркунне —
Чиперлетрĕ тĕнчене:
Алка çакрĕ хăвине,
Ĕнче тирчĕ хуранне,
Исмелерĕ йăмрине,
Тевет уртрĕ çăкине.
Ял çумĕнчи çырмасен
Шăнкăртатрĕç шывĕсем.
Чĕвĕл-чĕвĕл кайăксен
Янăрарĕç юррисем.

* * *

Тӳнкке-тӳнкке тӳнклетет,
Хитре улăх кĕр-кĕрлет.
Паян уяв мук-муксен,
Паян сăйкунь мек-мексен.
Качаки сиксе ташлать,
Вăкăрĕ тапса юрлать.
Лашисемпе ĕнисен
Вĕлкĕшеççĕ хӳрисем.
Паян кун кĕтӳ тухать —
Паян кун тĕнче юрлать.
Савнăç çитнĕ кĕтӳçне —
Хĕрсех калать шăхличне.



Шăнкăр-шăнкăр шăнкăртик!
Пăнчăр-пăнчăр пăнчăртик!
Кĕр кайрăм та çур килтĕм:
Тылли панчен хĕр каймасть,
Çатан çинчен сӳс анмасть.

Шăнкăр-шăнкăр шăнкăртик!
Пăнчăр-пăнчăр пăнчăртик!
Кĕр кайрăм та çур килтĕм:
Вăйпиттисем — сухара,
Ачи-пăчи — сӳрере.

Туçи вăрман паян кĕрлет,
Унта паян уяв сĕрлет:
Шăхлич калать Тямкки,
Тӳнкке шаккать Микки.
Сăрнай вĕрет Шăмпай,
Кĕсле вылять Тупай.

Ака пĕтсен, чечек тухсан,
Уяв пирте çапла ялан:
Ташша çапать Тимук,
Сĕтет унпа Катюк.
Ваййа тăрать Çеçук,
Юрра ярать Симук.



Ылăм, ылăм — кун çути,
Чуп турăм та — пыл тути.
Пирте улсем хурисем,
Çĕмĕрт евĕр куçлисем,
Тимĕр, пăхăр ăстисем.

Хĕрпи, хĕрпи — нар çути,
Чуптурăм та — сим тути.
Пирте хĕрсем саррисем,
Витĕр сенкер куçлисем,
Тĕрĕ-çĕвĕ ăстисем.



## ТУПМАЛЛИ


3. «Вăштăр-вăштăр уçă çил...»
4. «Сăрт тăрринчи çил армань...»
5. «Шĕшкĕ касрăм — çатан аврăм...»
6. «Кăмака çине вир акрăм...»
8. Тимĕрçĕ.
9. Шурă акăш.
10. Хурчăка.
Кайăк хурсем.
Тăрнасем.
12. Чакак.
Шыв чăххи.
13. Ăмăрткайăк.
14. Кăвакарчăн.
Шăпчăк.
«Сар хĕвелĕн ылтăн урисем...»
«Тух-тух, Хĕвел...»
16. Сĕм вăрманти хурăнин...
Юман.
17. «Качакине утланса...»
18. Çимĕп, çимĕп теекен...
20. «Çырма тăрăх йăпшăнса...»
21. Кашкăр.
22. «Сĕм вăрманти упийĕн...»
«Хура вăрман хыçне юр çунă».
24. «Çуркунне, çуркунне...»
«Тӳнкке-тӳнкке тӳнклетет...»
25. «Шăнкăр-шăнкăр шăнкăртик!..»
26. «Туçи вăрман паян кĕрлет...»
«Ылăм, ылăм — кун çути...»



Хакӗ **10** пус

**АХУН Валем (Максимов В. О.)**

**БЕЛЫЙ ЛЕБЕДЬ**

**Стихи для детей дошкольного возраста**

Редактор П. Е. Димитриев
Художник В. И. Агеев
Художественный редактор А. А. Афиногенов
Технический редактор В. М. Михайлов
Корректор Л. Ф. Козин

Сдано в набор 11-VI-1975 г. Подписано к печати 19-XII-1975 г. Формат 70×90/16. Бумага офсетная № 1. Физ. печ. л. 2,0. Усл. печ. л. 2,34. Учетно-изд. л. 1,41. Заказ № 1259. Тираж 17 000 экз. Цена 10 коп.

Чувашское книжное издательство, Чебоксары, пр. Ленина, 4. Типография № 1 Управления по делам издательств, полиграфии и книжной торговли Совета Министров Чувашской АССР. Чебоксары, Канашское шоссе, 13.

